Аслă Çĕнтерӳ уявĕпе саламлатпăр!

Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

37 (7677) № ✻ Кĕçнерни кун, 2009 çулхи майăн (çу) 8-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ăрусен çыхăнăвĕ

Ĕнер районти Культура çуртĕнче Аслă Çĕнтерĕве халалласа вăрçă тата ĕç ветеранĕсемпе, призывниксемпе тĕл пулу иртрĕ. Салтака кайма хатĕрленекен яшсем самантпа усă курса вăрçă ветеранĕсен аса илĕвĕсемпе кăсăкланчĕç. Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Г.А. Бардасов, Г.Д. Данилов, Н.Я. Васильев тата И.Д. Вязов – Аслă Отечествăлла вăрçă ветеранĕсем – ăс парса каланă сăмахсем Дмитрий Самойловпа Николай Енисеев призывниксене çарта кирлĕ пулĕç.

Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.

Хаклă ентешĕмĕрсем!

Сире Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!

Вуншар çул иртрĕ пулин те, этемлĕх историйĕнчи чи юнлă вăрçăри паттăрлăхăн сӳнми çути паян та пирĕн пата çитет. Çухатусен ыратăвне чăтса ирттерсе, пур вăй-хала пухса, хăйсене те шеллемесĕр Аслă Отечественнăй вăрçă паттăрĕсем мирлĕ пурăнассин правине сыхласа хăварнă. Çар çыннисемпе тыл ĕçченĕсем, пĕр стройра пулса, тахçантанпах кĕтнĕ ирĕклĕх кунне çывхартса пынă.

Чăваш Ен халăхĕ çирĕммĕш ĕмĕр чумине çапса аркатса Аслă Çĕнтерӳ тăвас ĕçе калама çук пысăк тӳпе хывнă. Унăн 208 пин ытла маттур ывăлĕпе хĕрĕ фронта тухса кайнă, тăшманпа çапăçса паттăрлăх, хăюлăх, хастарлăх кăтартнă. Çапăçу хирĕсенчен таврăнайманнисем, хăйсен пуçĕсене хунисемпе ĕмĕрех пирĕн асра пулĕç.

Хаклă ветерансем, ирĕклĕхпе пуç çинчи таса тӳпешĕн вĕçĕ-хĕррисĕр тав сире, сирĕн умăрта пуç таятпăр. Эпир яланах çĕнтерӳçĕсен аслă ăрăвĕнчен Тăван çĕршыва чăннипех юратма, çирĕп кăмăл-туйăмлă пулма, ырăлăх ĕненĕвĕшĕн хамăра хамăр шеллемесĕр тăрăшма вĕренсе пырăпăр.

Çак илемлĕ уяв кунĕнче сире çирĕп сывлăх, ăнăçу, телей тата юрату сунатăп!

Н.В. ФЕДОРОВ,
Чăваш Республикин Президенчĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсем, тыл ĕçченĕсем, тăлăх арăмсем, ентешĕмĕрсем!

Сире Аслă Отечественнăй вăрçăра Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 64 çул çитнĕ ятпа пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп.

Майăн 9-мĕшĕ ĕмĕрлĕхех пирĕн халăхăн паттăрлăх историне кĕрсе юлчĕ. Эсир хăрушă вăрçăра Тăван çĕршывăмăрăн ирĕклĕхĕпе чысне, никама пăхăнманлăхне сыхласа хăвартăр, ытти çĕршыв çыннисемпе пĕрле Европăри нумай халăха фашизмăн пусмăрĕнчен хăтартăр. Çăмăл килмерĕ Аслă Çĕнтерӳ: пирĕн районтан çак хăрушă вăрçа 9845 çын тухса кайнă. Вĕсенчен 5491-ĕшĕ каялла таврăнайман. Эпир паянхи мирлĕ пурнăçшăн пуçĕсене хунă, çавăн пекех Çĕнтерӳпе киле таврăннă салтаксен умĕнче çĕре çити пуç таятпăр. Кунне-çĕрне пĕлмесĕр тылра Çĕнтерĕве çывхартма пулăшнăшăн тыл ĕçченĕсене мĕн пур кăмăлтан тав тăватпăр. Тăлăх арăмсене вĕçсĕр-хĕрсĕр тӳсĕмлĕхпе вăй-хăваттăшăн, иксĕлми шанăçпа юратушăн пысăк тав.

Çулсем иртнĕçемĕн эсир тунă паттăрлăхăн пĕлтерĕшĕ татăх та ӳссе пырать. Сирĕн паттăрлăхăрпа хăюлăхăр, вăй-халăрпа чăтăмлăхăр, пĕлĕвĕрпе пуян опытăр çитĕнекен ăрава Тăван çĕршывăмăра юратма, унăн пуласлăхĕшĕн явапăлăха туйса ӳсме пулăшаççĕ.

Хисеплĕ çыннăмăрсем! Сывлăхăр çирĕп, ĕмĕрĕр вăрăм пултăр. Ватлăхăра çывăх çыннăрсен юратăвĕпе ăшши канлĕх кӳтĕр. Тӳпере яланах хĕвел йăл-йăлултăр, кайăксем юрă шăратчăр.

Ю.А. ИВАНОВ,
Муркаш район халăхĕн ячĕпе район пуçлăхĕ.

Хисеплĕ медицина сестрисем!

Сире професси уявĕпе – Пĕтĕм тĕнчери медицина сестрисен кунĕ ячĕпе – ăшшăн саламлатăп!

Сывлăх – çыншăн чи хакли. Эсир ăна пире упрама вĕрентетĕр, чирлĕ çынсене сывалма пулăшатăр. Мĕн чухлĕ тимлĕх, чăтăмлăх, сăпайлăх кирлĕ çакна валли. Эсир эмелпе кăна мар, çепĕç чĕлхĕрпе те сиплетĕр, кашнин валли ăшă сăмах тупăнать сирĕн, чуна йывăр вăхăтра лăплантарма пултаратăр, çынсене шанăç паратăр. Тавах сире çакăншăн.

Эсир малашне те çăмăл мар, анчах пархатарлă ĕçре ответлăха туйса ĕçлесе пырасса шанса тăратăп. Ăшă кăмăл-туйăм пĕрре те ан иксĕлтĕр сирĕн.

Сире тата Сирĕн çывăх çыннăрсене çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хăват, тулăх пурнăç, телей, ăнăçу сунатăп!

Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.

Тав сăмахĕ

Çуртрисене акса пĕтернĕ ятпа!

«Оринино» хуçалăх ертӳçине Ю. Шишокина, хуçалăхăн тĕп агрономне И. Блинована, В. Васильев тĕп инженера тата çурхи уй-хир ĕçĕсене хутшăннă ĕçченсене çуртрисем акса пĕтерес ĕçе районта пуринчен малтан вĕçленĕ ятпа, Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертӳçине П. Ефимова тата хуçалăхăн тĕп агрономĕпе А. Лукинпа тĕп инженерне Н. Белова, хуçалăхăн пур уй-хир ĕçченĕсене тырă-пулă акас ĕçе ăнăçлă вĕçленипе саламлатăп!

Агротехникăна пăхăнса кĕске вăхăтра Орининсем 400 гектар çинче, Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăх 488 гектар çинче çуртрисем акса хăварма мехел çитерчĕç. Анчах тырă-пулă акнипех çурхи уй-хир ĕçĕсем вĕçленмеççĕ-ха. Çакна шута хурса Орининсемпе Исетерккĕсем ытти ĕçсенче те тăрăшуллă пуласса шанас килет.

Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.

Хастарлăхпа палăраççĕ

Районта çурхи ака-суха ĕçĕсем анлă сарăлнă вăхăт. Çурхи кун çулталăк тăрантарать. Çакна шута хурса паян пĕр хресчен те çӳлтен килсе пулăшасса кĕтсе лармасть. Ĕнерхи кун тĕлне районта çурхи тыр-пул культурисене 5281 гектар çинче (51,3 процент) акса хăварнă. Ĕçсем, çӳлерех асăннă хуçалăхсемсĕр пуçне, уйрăмах «Восток», «Герой», Ильич ячĕпе хисепленекен, «Свобода» кооперативсенче, Сретинский, Бархаткин, Толстов хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче кал-кал пыраççĕ.

Тырă-пулă акса пĕтернисем çĕр улми вăрлăхĕ хатĕрлеççĕ, пĕр çул ӳсекен курăксене акма тухаççĕ («Герой», «Оринино» хуçалăхсем 31 тата 58 гектар акнă), выльăх кăшманĕ акаççĕ («Восток», «Герой», «Передовик» хуçалăхсем пурĕ 30 гектар акнă).

Районта 4781 гектар çине вăхăтра акса хăварнă кĕрхи культурăсем пĕтĕмĕшле аван хĕл каçнă. Вĕсен тĕп пайне минераллă удобренипе апатлантарнă та ĕнтĕ.

Çур аки ĕçĕсем пур харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсенче те малалла пыраççĕ.

Çĕнтерӳ кунĕ умĕн

Уявра – тимлĕхпе пулăшу

Çултан çул Аслă Отечествăлла вăрçа хутшăннисем сахаллансах пыраççĕ. Паянхи кун тĕлне районта вăрçă участникĕсем пурĕ 117 çын, вĕсемпе танлаштарнисемпе пĕрле – 132, упăшкисене вăрçăра çухатнисем пурĕ 26 тăлăх арăм пурăнаççĕ.

Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе Раççей Федерацийĕн Президенчĕн саламлă çырăвĕсене вăрçă участникĕсем, тылра ĕçленисем тата тăлăх арăмсем илчĕç. Çавăн пекех вĕсем патне Чăваш Республикин Президенчĕ уяв ячĕпе саламласа янă открыткăсем çитрĕç.

Район пуçлăхĕн Ю.А. Ивановăн саламлă çырăвĕсене те вăрçă участникĕсем алла илнĕ ĕнтĕ. Кунсăр пуçне тата районти кашни ял тăрăхнех вăрçă участникĕсем, тыл ĕçченĕсемпе тăлăх арăмсем валли хатĕрленĕ Тав çырăвĕсене çитернĕ. Пĕтĕм республикипех çӳлерех асăннă ватăсем парне – апат-çимĕç пуххи – илĕç. Унсăр пуçне Пенси Фончĕ урлă вăрçă участникĕсене Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе 350-шар тенкĕ материаллă пулăшу параççĕ.

Н. ПЕТРОВА, районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи.

Юбилей

Саламлатпăр



Юратнă, хаклă аттене, кукаçине, хăтана, хисеплĕ тăванăмăра – Анаткас ялĕнче пурăнакан **Корнил Корнилович КОРНИЛОВА** паянхи илемлĕ те çурхи кун 75 çул тултарнă ятпа чун-чĕрери чи ăшă та ырă сăмахсемпе саламлатпăр. Яланах çирĕп сывлăхлă пул, вăрăм кун-çул, иксĕлми вăй-хал сунатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн телей, пуянлăх, савăнăç.

Салампа: хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, тăхлачисем, тăванĕсем, пускилсем.

Хаклăран та хаклă аттепе аннене – Юнкă ялĕнче пурăнакан **Лидия Семеновнапа Виталий Никитич ФОМИНСЕНЕ** ылтăн туй ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Сирĕн кун-çул вăрăм пултăр. Ачусемпе, мăнуксемпе йăпанса пурăнмалла пултăр.

Саламлаканĕсем: ачисем, кинĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.

Этемлĕхе чуралăхран çăлса хăварнă

Май уйăхĕнчи çурхи çак кунсенче пирĕн çĕршыв тата пĕтĕм прогресивлă этемлĕх чи хаклă уявсенчен пĕрне паллă тавать – Аслă Çĕнтерӳ кунне, пирĕн халăх тата унăн хĕç-пăшаллă вăйĕсем фашистла Германипе унăн союзникĕсене çапса аркатнăранпа 64 çул çитнине.

Аслă Отечественнăй вăрçă иккĕмĕш тĕнче вăрçин тĕп тытăмĕ пулса тăрать. Этемлĕх историйĕнче те ун пек калăпăшлă вăрçă пулман. Çак вăрçăна 61 патшалăх, çĕр чăмăрĕ çинчи халăхсен 80 проценчĕ ытла хутшăннă. Çар ĕçĕсем Европăри, Азири, Африкăри 40 патшалăх территорийĕнче, тинĕссемпе океансен анлăшĕсенче пынă.

Вăрçă историйĕ пысăк çапăçусемпе палăрса тăрать. Чикĕ чаçĕсен паттăрлăхĕ, Брест крепоçне, Смоленска, Севастополе, Одессăна, Сталинграда хӳтĕленин тĕслĕхĕсем, Мускав патĕнче, Атăл çинче тата Курск патĕнче пынă çапăçусем пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтернĕ. Çак çапăçусенче пирĕн хĕçпăшаллă вăйсем вăрçăра татăклă улшăну тума пултарнă.

Николай Гастелло, Александр Покрышкин, Александр Матросов, 28 панфиловец тата ыттисем çапăçусенче кăтартнă паттăрлăх саманчĕсем пур ăрусемшĕн те тĕслĕх пулса тăраççĕ. Аслă полководецсен – Жуковăн, Рокоссовскийăн, Коневăн, Малиновскийăн пысăк ăсталăхне те палăртса хăвармалла.

Пирĕн хамăрăн паттăрсене нихăçан та манмалла мар. Çĕмĕртлĕх Чемей ялĕнчи Б.М. Васильев, Уйкас Апашри Я.А. Анисимов, Пăсăрман ялĕнчи И.Г. Мешаков, Исетерккĕ ялĕнчи Г.А. Алексеев, Çурлатринчи А.И. Воробьев çĕршывăн пысăк наградисене – Совет Союзĕн Геройĕн ятне тивĕçнĕ, А.А. Быков вара Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ пулса тăнă.

Тыл ĕçченĕсем те май пур таран Çĕнтерĕве çывхартма тăрăшнă. Вĕсем «Пĕтĕмпех фронт валли, пĕтĕмпех Çĕнтерӳ валли» лозунга тĕпе хурса ĕçленĕ. Фронтра паттăрлăх кăтартнипе, тылра çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçленипе пирĕн халăх çĕршыва, пĕтĕм Европа халăхне фашистсен чуралăхĕнчен çăлса хăварнă.

Шел пулин те, çак вăрçăна хутшăннисем пирĕн хушăра сахалрах та сахалрах. Çавăнпа та пирĕн чыслă тивĕç – вăрçă историне упраса хăварасси, хамăр паттăрсене астăвасси, çамрăксене патриотизмла воспитани парса, вăрçă ветеранĕсен мухтавлă традицийĕсене тĕпе хурса ӳстересси.

Çĕршыва сыхласа хăварнă çар çыннисене чыс та хисеп, çĕре çити пуç таятпăр сирĕн умăрта. Аслă Çĕнтерӳ уявĕ ячĕпе сире!

В. БУКЛАКОВ, Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссарĕ, подполковник.

ÇАР ЮЛТАШĔСЕМ, ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!

Хĕрлĕ Ялавлă Атăлçи-Урал çар округĕн канашĕ ячĕпе тата хам ятран Аслă Отечественнăй вăрçă, хĕç-пăшаллă вăйсен ветеранĕсене, вырăнти çапăçу хирĕçтăрĕвĕсене хутшăннисене, çар çыннисене, Атăл тата Урал тăрăхĕнчи регионсенче пурăнакансене пирĕн халăхăн паллă уявĕпе – Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунăранпа 64 çул çитнĕ ятпа – саламлатăп.

Вăрçăн йывăр çулĕсенче çарпа флот çыннисем, пĕтĕм совет халăхĕ массăллă паттăрлăх тĕслĕхĕ, Тăван çĕршыва чунтан юратнине кăтартса панă.

Çĕршыв салтаксемпе офицерсен, халăх ополченийĕн, тыл ĕçченĕсен, ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăхшăн хăйсен пурнăçне шеллемен çынсен паттăрлăх тĕслĕхĕсемпе тивĕçлипех мухтанма пултарать. Çак кун ĕмĕрлĕхех çирĕплĕхпе хăюлăх, паттăрлăхпа патриотизм тĕслĕхĕ пулса юлĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçă фронтовикĕсен ырă тĕслĕхĕсене хальхи ăрури çар çыннисем малалла тăсаççĕ. Вĕсем хăйсен Конституци тивĕçне чыслăн пурнăçлаççĕ: çĕршывăн оборона хăватне тата хăрушăрлăхне ӳстерсе пыраççĕ, çирĕплĕх тĕслĕхĕ кăтартаççĕ, çар ăсталăхне аталантараççĕ.

Çак кун уйрăмах вăрçă тата хĕç-пăшаллă вăйсен ветеранĕсене, хулпуççи çинче унччен пакун çакса çӳренисемпе халĕ çакса çӳрекенсене, çĕршыва хӳтĕлесси хăйсен пĕтĕм пурнăç тĕллевĕ пулса тăнисене вĕсен пархатарлă ĕçĕшĕн, хаяр тăшмана çапса аркатса Çĕнтерĕве çывхартнăшăн тав сăмахĕ каласа уяв ячĕпе саламлатăп. Раççейĕн çĕнтерĕвĕсен мухтавлă историне малалла тăсакан çар çыннисен çемйисем, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем те чи ырă сăмахсене тивĕç.

Тепĕр хут уяв ячĕпе сире, туссем! Сире ырă сывлăх, лайăх кăмăл-туйăм, телей тата ăнăçу сунатăп!

А.В. БАХИН,
Атăлçи-Урал çар округĕн çарĕсен командующийĕ, генерал-лейтенант.